# Муркаш Ен Республика кунне уявларĕ

Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнченпе тухать

47 (7578) № ✻ *Шăмат кун, 2008 çулхи июнĕн (çĕртме) 28-мĕшĕ* ✻ *Хакĕ ирĕклĕ*


## Чыса тивĕç ĕç хастарĕсем



**Республика кунне уявланă май районти ĕç хастарĕсенчен чи маттуррисем Чăваш Республикин Президенчĕн Указĕпе çакнашкал чыса тивĕçрĕç:**

– «Хуçалăхсем хушшинчи «Моргаушская» строительство организацийĕ» хупă акционерлă обществăн автокран машинистне **Петр Алексеевич АРГАНДЕЕВА** строительствăра нумай çул тухăçлă ĕçленĕшĕн «Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ строителĕ» хисеплĕ ят панă;

– Суворов ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕн тĕп зоотехникне **Галина Владимировна ВАСИЛЬЕВАНА** ял хуçалăх производствинче нумай çул тухăçлă ĕçленĕшĕн «Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ зоотехникĕ» хисеплĕ ят панă;

– «Ударник» сăнавлă производство хуçалăхĕн Вăрманкасси уйрăмĕн механизаторне **Изосим Николаевич ВАСИЛЬЕВА** ял хуçалăх производствинче нумай çул тухăçлă ĕçленĕшĕн «Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ механизаторĕ» хисеплĕ ят панă;

– Мăн Сĕнтĕр райповĕн Москакассинчи куллен кирлĕ таварсен магазинĕн заведующине **Людмила Ивановна ГАВРИЛОВАНА** халăх ыйтăвĕсене тивĕçтерес сферăра нумай çул тухăçлă ĕçленĕшĕн «Чăваш Республикинчи халăх ыйтăвĕсене тивĕçтерес ĕçĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» хисеплĕ ят панă;

– «Росгосстрах-Поволжье» чикĕллĕ яваплăхлă общество филиалĕн-«Чăваш Республикинчи Тĕп управленийĕн» Муркашри страхлакан пайĕн страхлакан агентне **Алефтина Никифоровна ЛАПТЕВАНА** халăх ыйтăвĕсене тивĕçтерес сферăра нумай çул тухăçлă ĕçленĕшĕн «Чăваш Республикинчи халăх ыйтăвĕсене тивĕçтерес ĕçĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» хисеплĕ ят панă.

Чăваш Республикин Президенчĕн Хушăвĕпе çаксем Тав çырăвĕсене тивĕçрĕç:

– ял хуçалăх производствинче нумай çул тухăçлă ĕçленĕшĕн «Оринино» ял хуçалăх производство кооперативĕн ĕнисене машинăпа сăвакан операторĕ **Галина Пантелеймоновна КОВАЛЕВА**;

– ял хуçалăх производствинче нумай çул тухăçлă ĕçленĕшĕн тата ĕçри ӳсĕмсемшĕн «Герой» ял хуçалăх производство кооперативĕн председателĕ **Ростислав Николаевич ТИМОФЕЕВ**.

**Сăн ӳкерчĕкре: И.Н. Васильева чыслансă самант.**

## ХИСЕПЛĔ ЕНТЕШСЕМ!

**Чăваш Республикин Президенчĕ Н.В. Федоров Республика кунне пирĕн районта ирттерме йышăнни республика Муркашсен ĕçне курса тивĕçлĕн хакланине пĕлтерчĕ. Ку вăл пирĕншĕн пысăк чыс, çав вăхăтрах çав тери пысăк яваплăх пулчĕ. Уяв умĕн районта çĕнĕ объектсене хута ятăмăр: Муркашра – физкультурăпа спорт комплексне, Кашмашра – республикăри чи пĕрремĕш модернизациленĕ база Культура çуртне, Шетмĕпуçĕнче – районти саккăрмĕш пĕтĕмĕшле практика врачĕн уйрăмне, «Сеспель» акционерсен хупă обществинче - çĕнĕ производство цехне. Кĕске вăхăтрах районта нумай çул турăмăр, юсарăмăр. Хăнасене республикăн сăн-сăпатне кăтартма пире шаннăшăн, çӳлерех асăннă объектсене хута яма укçа-тенкĕпе пулăшнăшăн Чăваш Республикин Президентне Н.В. Федорова, Правительствине пысăк тав.**

**Çавăн пекех республикăри министерствăсене, Муркашсен Шупашкарти ентешлĕхне, предприятисемпе организацисен, учреждениесен ертӳçисене, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене ĕçе йĕркелесе пынăшăн, уява ирттерме пулăшнă спонсорсене тав тăватăп.**

**Чĕререн тухакан тав сăмахĕсене манăн уйрăмах район ĕçченĕсене калас килет. Ответлăха туйса эпир пурте пĕрле уява хатĕрлентĕмĕр. Район центрне, ялсене, урамсене, пӳрт умĕсене, аслă çул хĕррисене тирпей-илем кĕртрĕмĕр, предприятисемпе организацисен, учреждениесен çурчĕсене, картасене юсаса çĕнетрĕмĕр. Кĕскен каласан, çав тери нумай ĕç туса ирттертĕмĕр. Халĕ ĕнтĕ уяв хыçа юлчĕ. Хăнасене чыслăн кĕтсе илсе сумлă ăсатрăмăр. Тавах сире ăнланнăшăн, хатĕрленӳ ĕçĕсене пĕр шухăшлăн, тăрăшса пурнăçланăшăн. Малашне пĕр-пĕрне ăнланса, пĕр тĕллевлĕн çĕнĕ çитĕнӳсем тăвасчĕ, хамăр пурăнакан тăван енĕмĕре илемлĕрех тăвассишĕн тăрăшасчĕ, Республика кунне хатĕрленсе тунине упрасчĕ, пуçарнă ырă ĕçсене малалла тăсасчĕ.**

**Пурсăра та çирĕп сывлăх, ĕçре ăнăçу, телей, çемьере килĕшӳпе тату пурнăç сунатăп.**

**Район пуçлăхĕ Ю.А. ИВАНОВ.**

## Апчара асфальт çул çитрĕ

Республика кунĕ пирĕн района юсанă тата çĕнĕ çулсемпе вашлаттарса килсе кĕчĕ. Район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов каланă тăрăх, Республика кунĕ умĕн районта пурĕ 35 километр çул тунă тата юсанă. Апчар ялĕнче пурăнакансем те хăйсен ялне çитичченхи çула кăçалхи ноябрь уйăхĕ тĕлнелле çеç кĕтнĕччĕ. Хăйсен тăрăшулăхне кура та çывăхлатрĕç çав çак куна: иртнĕ суйлавра хăйсем республика, Раççей суйланă çулпа пыма хатĕррине кăтартса пачĕç.

– Районтан çак çула халех тума ыйтрĕç, - терĕ июнĕн 23-мĕшĕнче çак çула уçма пуçтарăннă ял халăхне ăна тунă «ДЭП 146» акционерсен уçă обществин ертӳçи В.А. Павлов.



Ку çул мĕн тери нушаллă пулнине асăннă ялта пурăнакансем çеç мар, район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов хăй те лайăх пĕлет. Иртнĕ ĕмĕрĕн 80-мĕш çулĕсенче ВЛКСМ комсомол райкомĕн пĕрремĕш секретарĕнче кунта пухăва килсен, каялла таврăннă чух автомашинăпа пылчăк ăшне кĕрсе ларнине мĕнле манса кайăн. Çак çухрăм çурă ытларах çул Апчарсене ĕмĕрлĕх савăнăç илсе килчĕ.

– Уяв пулать те иртсе каять, çул вара юлать. Çулĕ яланах такăр пултăр, çак çулпа çӳрекенсен пурнăçĕ ăнса пытăр, – терĕ Юрий Александрович хĕрлĕ хăйăва касса çула уçнă май.

Ильинка ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Б.А. Сапожников ял халăхĕнчен район пуçлăхне, строительсене çул тунăшăн тав турĕ. Ял старости Б.Ю. Кузнецов та халăх ячĕпе чĕререн тухакан тав сăмахĕсене аларĕ.

– Халиччен ытлашши тухсах çӳремен ватăсем те паян çакăнта килчĕç савăннипе, - терĕ вăл.

Çул уçнин уявне ялти культура вучахĕ çумĕнчи артистсем çул çинчех илемлĕ юрă-кĕвĕпе уçса пачĕç. Апчарта вара ял уявĕнче пурте пĕрле савăнчĕç.

**Л.ПАВЛОВА.**

## Кун пекки республикăра хальлĕхе çук-ха



Республика кунĕ Кашмашра пурăнакансемшĕн ялан-лăхах асра юлать. Июнĕн 23-мĕшĕнче кунта республикăра чи пĕрремĕш модернизациленĕ база Культура çурчĕ уçăлчĕ. Çакна кунта пурăнакансем ял уявĕ йĕркелесех паллă турĕç. Ара, халь Культура çуртĕнче Чăваш Республикин культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕсен министрĕ Р.М. Лизакова каланă пек, канма та, юратнă кружоксене çӳреме те пур услови те пур. Çутă тата сасă, çавăн пекех мультимеди оборудованийĕ, дискотека залне валли ятарлă оборудовани, компьютер – пĕтĕмпе 700 пин тенкĕлĕх кӳрсе килнĕ. Ку вăл – министерство парни. Республика Президенчĕн ялти клубсене модернизацилемелли çинчен калакан Указĕпе килĕшӳллĕн çак 3 çул хушшинче пĕтĕмпе Чăваш Енте çакăн пек тата 199 Культура çурчĕ пулмалла. Парнепе усă курма пуçланине кил хуçисем хăнасене кăтартса пачĕç çав кунах, видеопроектор экранĕ çинче – Çатракасси ял тăрăхĕнче çуралса ӳснĕ паллă çынсем.

Палăртмалла, ку тăрăхра Раççей Геройĕ Н.В. Смирнов, çавăн пекех Мухтав орденĕн тулли кавалерĕ А.А. Быков тата ытти паллă çынсем çуралса ӳснĕ. Çакнашкал Культура çурчĕ уçнине паллă тума Раççей Геройĕсем Е.Г. Борисовпа Г.Г. Ирейкин килнĕ. Хăнасем район пуçлăхĕпе Культура çурчĕпе паллашрĕç. Ун хыççăн залра халăхпа тĕл пулчĕç.

- Республика кунĕн парни вăл сирĕншĕн. Упрăр Культура çуртне, ачăрсене те тирпей-илеме хăнăхтарăр, – палăртрĕ Кашмашсене саламланă май район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов.

Роза Михайловна хăйĕн сăмахĕнче Кашмашсем пуçаруллă пулнине палăртрĕ. Культура çуртне çĕнетес ĕçе Кашмашсем чылай маларахах пуçăнчĕç, федераллă программăна кĕме пултарчĕç. Çавна май укçатенкĕ федераллă бюджетран та килчĕ. Ир тăракан кайăк тутă пулнă тесе ахальтен каламан иккен ваттисем. Ку çурта çĕнетме пĕтĕмпе вара 2,5 млн. тенкĕ тухса кайрĕ.

Хăнасем пурте Кашмашсемпе çывăхри ялсенче пурăнакансене вăхăта кунта усăллă ирттерме ырлăх-сывлăх сунчĕç.

Каланине çав кунах пурнăçларĕç Кашмашсем. Никама та тунсăхлă пулмарĕ кунта. Культура çурчĕн пĕрремĕш хутĕнче стена çинче йĕркеленĕ сăн ӳкерчĕксен куравĕнче Ырă ĕçсен çулталăкĕнче ку тăрăхра пурăнакансем мĕнлерех пурăннипе паллăшрĕç. Урамра вара ал ĕçĕсен куравне йĕркеленĕ. Культура çурчĕпе юнашарах туса лартнă ача-пăча площадкинче хаваслă янăрав чарăнмарĕ. Тепĕр енче тунă спорт площадкинчен те халăх татăлмарĕ. Культура çуртĕнче кунти купăсçăсем пуçланă концерта ытти пултарулăх коллективĕсем тăсрĕç. Çакнашкал хаваслă кăмăл çĕнелнĕ Культура çуртĕнче пĕрре те ан сӳнтĕр.

**Л. ТУКТИНА.**